## Милици хроникинчен

# Çĕнĕ пӳртĕн стени «кивелнĕ»

Шупашкартан яла пурăнма килес тесе пĕр çемье тăрăшсах пирĕн районти пĕр салара пӳрт лартнă. Ăна хута яман пулин те, тĕп ĕçĕсене пĕтеркеленĕ кил хуçисем. Юнашар ялти çул çитмен çамрăка вара пӳрт çакнашкал сăнпа та хăй патне вăйлă илĕртнĕ курăнать.

Ĕç кунĕ вăхăтĕнчех (ачасен – вĕренӳ кунĕ), ирхи 9 сехет тĕлĕнче çак каччă хăйĕн икĕ юлташне пӳрт патне ертсе пырать. Çĕнĕ пӳрте хуçисенчен малтан «пурăнма» кĕрес тенĕ-ши? Ахаль те вĕçне çити туса пĕтереймен пӳртĕн пĕр стенине сӳтме тытăнаççĕ хайхискерсем – кирпĕч хыççăн кирпĕч вăрăнать айккинелле. Хăйсене кĕмелĕх шăтăк тусан вара ĕçе пуçараканĕ шалтан пăчкă, мăлатук, саморезсем йăкăртса тухать. Кунпа кăна вĕçленмест-ха çак ĕç.

Иккĕмĕш пайĕ те «пуçаруçăн» сценарийĕпех иртет. Хальхинче вăл хăйпе пĕрле пыма урăх юлташа чĕнет. Ку та çул çитменскерех. 10 сехет тĕлĕнче иккĕшĕ пӳрте кĕрсе тепĕр «тĕрĕслев» ирттереççĕ. Каллех куç тĕлне кирлĕ япаласем пулаççĕ – тимĕр касмалли çаврака, ийĕ. Вĕсене вăрласа тухаççĕ çамрăксем. Кил хуçисене самаях сиен кӳреççĕ.

Каччăсем платниксен хатĕрĕсем пирки лайăх пĕлни курăнать. Ашшĕсем ĕçлеме хăнăхтарнă ĕнтĕ. Анчах та ачисен вăрлас енĕ те пуррине асăрхайман пулас. Ача шкулах кайрĕ-ши? Мĕн сăлтавпа килте мар? Çаксене пĕлсех тăмалла çав. Атту кайран çак çул çитмен вăрăсенни пек уголовнăй ĕç витĕр тухмалла пулать.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

## Редакци почтинчен

# Тăван чĕлхене хисеплемелле

Эпĕ «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатпа 50 çула яхăн туслă пурăнатăп. Кашни çулах çырăнса илетĕп. Паян район хаçачĕсĕр пурăнма май та çук – радио пĕтнĕ-çке. Ăçта мĕн çĕнни, ăçта мĕнле улшăнусем пулса иртнине пĕлесех килет. Çавăнпа та «Çĕнтерӳ ялавĕ» кашниншĕнех юлташ пуласса хамăн юлташсене те калатăп.

Юлашки çулсенче рынок системи пирĕн малалла аталанса пыракан пурнăçа арпаштарсах ячĕ пулас. Чăваш çырулăхне тĕпчекенсем те пăтрашăнсах кайрĕç пулмалла. Мĕне кирлĕ-ха хальхи вăхăтра чăваш чĕлхине çĕнĕ сăмахсем кĕртсе предложенисене пăсни, йывăррăн ăнланмалла туни? Каçарăр та, «ӳнер» сăмахăн пĕлтерĕшне ку тарана çитсе те пĕлеймерĕм. Ыйтсан та тĕплĕн ăнлантарса паракан пулмарĕ. Уйăх ячĕсене те ĕлĕкхи кивĕ ятсемпе калани-çырни килĕшсех каймасть, вĕсене хăнăхма питĕ нумай вăхăт кирлĕ.

Нумай пулмасть пурнăç ерипен малалла кайнă пек туйăнатчĕ. Халĕ ĕнтĕ асаттесен саманине таврăнма пуçларĕ. Унпа пĕрле çырулăх та каялла каясшăн. Чăваш çĕршывĕнче пурăнатпăр пулсан та, хамăрăн чăваш çырулăхĕпе туллин усă кураймастпăр. Муркаша ĕç тума кайсан та пур хут çине те вырăсла çырмалла-çке. Çакă ниепле те чăваш чĕлхипе ирĕккĕн усă курнине пĕлтермест. Пĕлтерӳсем те çук пирĕн. «Объявленисем» кăна.

Чăвашсен пурнăçĕ аталанăвăн нихăш тапхăрĕнче те çăмăл пулман. Нумай пусмăр чăтса ирттерме тивнĕ. Вырăссемпе пĕрлешсен ирĕксĕрех вĕсен чĕлхине вĕренме тивнĕ. Эпир вара паян ялти пухусенче те, вĕрентӳре те вырăсла калаçма тăрăшатпăр. Кирлех-ши ку? Чăваш пулса çуралнă ачана вырăсла калаçтарса, вĕрентсе ăна эпир чăваш чĕлхи мĕн тума кирлине ăçтан ăнлантарма пултаратпăр-ха? Ăна вăл ăнланмĕ те. Республикăра вара патшалăх чĕлхи иккĕ.

**Павел ИВАНОВСКИЙ.**

## Çамрăксен çулталăкĕ

# Çĕнтерӳсем татах вăй хушаççĕ

Муркаш районĕнчи хастар яш-кĕрĕмĕн çитĕнĕвĕсем хушшинче Муркаш лицейĕнчи кадетсен тӳпи те курăмлă. Районти нумай ачасемшĕн кадетсем тĕслĕх вырăнĕнчех. Çамрăксен çулталăкĕнчи çитĕнӳсем уйрăмах палăрăмлă. Акă Пĕтĕм Раççейри кадетсен пултарулăх конкурсĕн регионаллă тапхăрĕ кăçал Çĕмĕрле хулине йыхравларĕ Муркаш кадечĕсене. «Тăван çĕрĕн çамрăк таланчĕсем» – çак ятпа вăл пĕрремĕш çул çеç иртмест.

Кăçалхи ăмăртура Муркашри кадетсен класĕ маттуррисен хушшинче пулчĕ. Конкурсра ĕçсене тĕрлĕ номинацисемпе хакларĕç. 10-мĕш кадет класĕн вĕрсе каламалли инструментсен ансамблĕ 1-мĕш вырăна тивĕçрĕ. «Журналистика» номинацинче вара М. Салтыкова палăрчĕ – Муркаш кадечĕ 2-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ. Çак номинацирех, сăвă çыракансем хушшинче те пирĕн кадет Е. Антонова мала тухрĕ. Юрăсем юрлассипе те пирĕн хĕрсем маттур – 2-мĕш вырăн пулчĕ вĕсен. Çак ăмăртура видеофильмсен тата видеорепортажсен конкурсĕ те пулчĕ. «Кадетсен кунĕ» видеорепортажпа Муркашри кадетсен класĕ 3-мĕш вырăна тивĕçлĕ пулчĕ.

Çакнашкал ăмăртусене тăтăшах хутшăнса кадетсем хăйсен пултарулăхне татах та ӳстерсе пыраççĕ, мал туртăмлă пулса аталанаççĕ.

**А. ФЕДОРОВ, кадетсен класĕн ертӳçи.**



**Сăн ӳкерчĕкре: кадетсен вĕрсе каламалли инструментсен ансамблĕ.**

## Çырусен тишкерĕвĕ

**ХАÇАТА ШКУЛ АЧИСЕМ, ВĔРЕНТЕКЕНСЕМ, КУЛЬТУРА ĔÇЧЕНĔСЕМ ТĂТĂШАХ ХĂЙСЕМ ПАТĔНЧЕ ТУСА ИРТТЕРНĔ ИНТЕРЕСЛĔ УЯВ КАÇĔСЕМПЕ ЫТТИ ТĔРЛĔ МЕРОПРИЯТИСЕМ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРСЕ ÇЫРУСЕМ ÇЫРАÇÇĔ. ПАЛЛАШАР-ХА ВĔСЕМПЕ.**

Москакассинчи вăтам шкулти И. Пушкина вĕрентекен хăйĕн хыпарĕнче шкулта пуçламăш классем хушшинче иртнĕ «Çуркунне мисĕ – 2009» конкурсра 2-мĕш класра вĕренекен Мария Киршева çĕнтернине пĕлтерет. Н. Алексеева, Т. Миронова тата Ю. Терентьева вара тĕрлĕ номинацисене тивĕçнĕ. Москакасси шкулĕнче Пĕтĕм Союзри биатлонпа тата йĕлтĕрпе чупассин çĕнтерӳçин С.Р. Кириллов парнисемшĕн йĕлтĕр эстафети те иртнĕ. 6-мĕшсемпе 10-мĕшсем чи маттуррисем пулнă. Шашка-шахмат вăййисемпе, теннispa, волейболпа та ăмăртусем интереслĕ иртнĕ.

Тойкилтĕри вăтам шкулта ĕçлекен Ю. Евстафьева кунти шкул ачисем Турайри вĕренекенсемпе туслă тĕл пулу ирттернине хыпарлать. Тойкилтĕ шкулĕн вĕренекенĕсем мала тухнине пĕлтерет. Иккĕмĕш тĕл пулура (Турайĕнче) кил хуçисем палăрнă. Тойкилтĕре А.В. Васильев тренер ĕçленипе ачасем çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăваççĕ. Тренировкăсене самантлăха та чарманни, шкулта ырă кăмăллă лару-тăру пулни те çакăн çине пысăк витĕм кӳрет.

Шетмĕпуçĕнчи Культура çурчĕн ертӳçи В. Никитина кунта йăлана кĕнĕ Хĕл ăсатăвĕн уявне хаваслăн ирттернине пĕлтерет. Спорт ăмăртăвĕсемпе концерт номерĕсем пурне те килĕшнĕ. 3 çулхи ачаран пуçласа 60 çулхи тăхлачă таранах илемлĕ юрăсем шăрантарнă иккен. Карчăксем вĕрӳ-суру чĕлхине те аса илнĕ. Çак пысăк уява пухăннисене А. Петровпа А. Нестеров кунĕпех техĕмлĕ шашлыкпа тивĕçтернĕ. Тивĕш, Катăкуй, Сарчак тата Турхан ялĕн командисем хастар пулнă уяв ăмăртăвĕсенче. Ял çыннисем А. Васильев, В. Волков, В. Павлов, Н. Александров тата В.И. Павлов спонсорсене тав тăваççĕ.

Анаткассинчи пуçламăш шкул-ача сачĕ те интереслĕ пурăнать. И. Гордеева, М. Пастухова тата тепĕр 6 вĕренекен ялти библиотекăпа тачă çыхăну тытнă пирки çыраççĕ. Г. Андреева библиотекарь тĕрлĕ вăйăсемпе конкурссем часах ирттерет-мĕн 3-4-мĕшсемпе. Вулав залĕнче тĕрлĕ хайлавсене çийĕнчех сӳтсе яваççĕ Анаткассисем. Кунта ачасемпе аслисем пĕрле пулса Муркаш районĕн карттине пысăклатнă. Паллă çынсене те хăйсен ялĕсем тĕлне «çыпăçтарнă». «Тетте» журнала та ачасем библиотекăра тĕплĕн тишкереççĕ. Иртнĕ кунсенче ял библиотекинче «Утатпăр утмăла, çитетпĕр çитмĕле» уяв касĕ те иртнĕ.

Мартăн 20-мĕшĕнче «Золушка» ача садĕнче пур ушкăн та Хĕл ăсатăвĕн уявне пухăннă. Çакăн çинчен С. Карасевапа Н. Иванова воспитательсем пĕлтереççĕ. Вăрăм çӳçеллĕ тутăрсем çыхнă хĕр ачасем, илемлĕ калпаксем тăхăннă арçын ачасем пĕтĕм кăмăлтан савăннă. Унта Хĕл Мучи те (С. Каликов), савăнăçлă клоунсем те (С. Карасева, В. Репина), Вупăр карчăкĕ (Н. Иванова) тата Çуркунне (С. Вершков) пулнă. Çуркунне пурне те çуллă икерчĕпе, техĕмлĕ чейпе хăналанă. «Шăнкăр шыв юххи евĕр ача сасси ялан янратăр, шăнкăрч сасси пек савăнăçлă ача кулли ялан илтĕнтĕр, симĕс йывăçкурăк чĕрĕлнĕ пек пирĕн пурнăç та малаллах шутăр», – суннă Çуркунне.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Иккĕ пăрулană шурăпа хура тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-927-840-93-60.

Продаю сенаж кормовой для КРС, молочный холодильник. Тел.: 8-902-240-99-18. 1-3.

Продаются пчелосемьи. Тел.: 8-906-131-99-24.

Куплю лошадь. Тел.: 8-905-198-81-63.

## Прогноз погоды с 4 по 11 апреля

www.yandex.ru

| сб 4 | вс 5 | пн 6 | вт 7 | ср 8 | чт 9 | пт 10 | сб 11 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| переменная облачность, небольшой снег | переменная облачность, небольшой снег | облачно, небольшой снег | переменная облачность, небольшой снег | переменная облачность, небольшой снег | облачно | переменная облачность | облачно |
| +1 | -1 | +1 | -4 | -4 | -2 | +1 | +3 |
| -7 | -3 | -5 | -10 | -10 | -7 | -3 | -2 |

Требуются профессиональные каменщики для строительства коттеджей под Москвой.
Тел.: 8-909-681-10-69.

Блоки керамзитобетонные, цемент, песок, гравмасса, г. Чебоксары.
Тел.: 8-927-668-81-10, 8-927-668-84-40. 2-8.

## Пĕлтерӳсем. Объявления

Халăхран лайăх хакпа ĕне, тына, вăкăр ашăн тата чĕрĕ виçепе туянатпăр. Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 4-5.

КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ ГРАЖДАН
“АГРОКРЕДИТ”
ПРЕДОСТАВЛЯЕМ КРАТКОСРОЧНЫЕ
ЗАЙМЫ
ПРИНИМАЕМ НА ХРАНЕНИЕ
СБЕРЕЖЕНИЯ
НА ВЫГОДНЫХ УСЛОВИЯХ
Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д.4
тел.: 62-8-13
Является членом Республиканского Союза КПКГ
Услуги предоставляются пайщикам кооператива

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150, керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмасса, керамзит. Доставка. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97. 6-10.

*Кирпич м-100,м-125,м-150; керамический одинарный полуторный; силикатный белый, желтый, серый.
*Блоки керамзитные, газосиликатные.
*Кольца колодезные.
*Пеноблоки.
*Шифер.
*Цемент.



УСЛУГИ МАНИПУЛЯТОРА
Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-88-00-483. 3-5.

ИП Ершов А.В. делает на заказ банные печи любой формы, а также гаражные, уличные ворота. Продает угольники, швеллера, трубы на забор и ворота. Новый завоз. Емкости из нержавеющей стали, прицепы на мотоблоки. Доставка. Обращаться по тел.: 8-919-655-21-51 (Моргауши, плодокомбинат). 1-5.




Вăкăрсем, тынасем, сурăхсемпе такасем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57.

БЛОКИ керамзитобетонные: 20х20х40, 10х20х40, 12х20х40, пропаренные, вибропрессованные. От производителя.
ЦЕМЕНТ М-400, КОЛЬЦА колодезные, ТРУБА Д60 (под столбы). Доставка. Тел.: 8-927-848-78-16, 8-927-845-03-12.

Продаю пиломатериал: хвоя, береза, осина, дуб. Срубы на заказ. Доставка. Тел.: 8-903-389-14-00. 5-8.

ИП Баранов Э.И. продает строительные материалы: доски хвойные обрезные, брусья, металл-швеллеры, угольники, трубы, цемент, шифер.
Обращаться в «Моргаушагропромснаб» или по тел.: 8-903-346-40-58. 1-5.

Продаю навесную копалку, грабли конные для мотоблока, ворошилки ВЦН, ГВК-6, плуги 2-х, 3-хкорпусные; косилки: роторная, сегментная, конная; пресс ПР-200, культиватор КПЭ-3,8. Тел.: 8-905-341-45-24.

Турайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕн А.В. Миронован хуньашшĕ

**Геннадий Миронович МИРОНОВ**

вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

Муркаш райпо коллективĕ кунта бухгалтер пулса ĕçлекен Т.А. Тимофеевăн тăван **АМĂШĔ,** кунтах водитель пулса ĕçлекен Ю.Н. Тимофеевăн **ХУНЬАМĂШĔ** йывăр чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1,5 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 03.04.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3860.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.